**Июнĕн 8-мĕшĕнче – Социаллă ĕçченсен кунĕ**

# Çынсене пулăшасси – пирĕн тивĕç

Социаллă хӳтлĕхе тивĕç çынсене май пур таран пулăшасси пирĕн пĕрремĕш тивĕç пулса тăрать. Хамăр тивĕçе вара эпир чыслăн пурнăçлама тăрăшатпăр.

Хальхи вăхăтра пулăшу илсе тăракан ашшĕ-амăшĕсем 2448 çын, çемьесенчи ачасем 4226 шутланаççĕ. Ачасем валли республика бюджетĕнчен июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 8815 пин тенкĕ уйăрса панă. Кунпа пĕрлех çие юлнă хĕрарăмсене укçан компенсаци 2,7 пин тенкĕ, опекунсемпе попечительсене 2234,5 пин тенкĕ, ачасем усрава йышăннă çемьесене пособи 453,3 пин тенкĕ, ĕç укçи 322,9 пин тенкĕ, çие юлнăшăн тата ача çуратнăшăн пособи 50 пин тенкĕ, ача 1,5 çула çитиччен пăхса пурăнма паракан пособи федераллă бюджетран 3341,4 пин тенкĕ, ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособи 384,1 пин тенкĕ, ниçта та ĕçлеменнисене пытарма 127 пин тенкĕ тӳлерĕмĕр. Пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн субсидисем 800 пин тенкĕ уйăрса панă.

Çулталăк пуçланнăранпа «Ветерансем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн 1325 пин тенкĕ уйăрнă, 1116,1 пин тенкипе усă курнă. «Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн вара 5355,6 пин тенкĕ уйăрнă пулсан, 3504,3 пин тенкипе усă курма май килчĕ.

2009 çулхи март уйăхĕнче чирлекен 8 инвалида автотранспортшăн тивĕçекен укçапа тивĕçтертĕмĕр. Çемьере тăрантаракан вилнисене 2 çемьене хăйсен пурăнмалли çурчĕсене юсама укçа уйăрса панă. Аслă Отечественнăй вăрçăн 3 инвалидне çурт-йĕр илме социаллă тӳлев свидетельствисем панă, 3 инвалид-пенсионера интернат çурчĕсене вырнаçтарнă.

Районĕпе 4484 çемьере 7385 ача пурăнать. Нумай ачаллă çемьесем 480. Май пур таран вĕсене те тимлĕхсĕр хăвармастпăр. Кăçалхи 5 уйăхра йывăр лару-тăрури 89 çемьере пулнă, 33 çемьене пулăшу панă.

Пĕччен пурăнакан ватă çынсем 789 шутланаççĕ. Вĕсенчен 120-шне килте пăхса тăраççĕ. Кăçалхи 5 уйăх хушшинче социаллă пулăшу илес ыйтупа пирĕн пата çулланнă 349 гражданинпа инвалид пычĕç.

Ветерансене, инвалидсене активлă пурнăçран хăварас теместпĕр. Вĕсене хутшăнтарса районта тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар иртеççĕ. Республика шайĕнчи мероприятисене те хутшăнатпăр. Çакă вĕсене малашлăха çирĕпрех пăхма, пурнăç çулĕпе сулмаклăн утма май парать.

**Н. ПЕТРОВА,**
**Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**



*Ватта ырă сунакан хăй те сумлă пулакан. Çаплах пултăрччĕ теес килчĕ Нискассинче пурăнакан 90 çулхи Феодосия Димитриевна Алексеева патĕнчен тухнă чух. Ватă çынна пăхакан социаллă ĕçчен Галина Петровна Степанова Феодосий аппана 10 çул ытла пăхать. Галина Петровнан ăшă кăмăлĕпе тирпейлĕхне кура Ф. Алексеева пӳрт-çуртĕнче те, кил хушшинче те ытлашши япала çук, пурте хăй вырăнĕнче, тирпейлĕх ытамĕнче. «Эпир Нискассинче çуралса ӳснĕ. Паян çемье хулара пулсан та эпĕ, тивĕçлĕ канури çар медикĕ, Феодосия аппана пулăшассинчен пăрăнмастăп. Паянхи ытлă-çитлĕ пурнăçшăн «Сеятель» хуçалăхра уй-хир бригадинче вăй хунăскер, вăл çавна тивĕç», – терĕ Ф. Алексеевана пăхса пурăнакан Галина Степанова (сăн ӳкерчĕкре варринче). Çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче 90 çул тултарнă ятпа кинемее саламлама Муркашран килсе çитнĕ ватă граждансене тата инвалидсене килте социаллă йĕркепе пăхассине йĕркелекен уйрăмăн пуçлăхĕ Татьяна Кириллова (сăн ӳкерчĕкре сулахайра) çуралнă кун ячĕпе парне тыттарнă май асаннен пурнăçĕпе интересленчĕ.*

*– Ман тĕлĕшпе тимлĕх çителĕклех. Пурсăра та пысăк тав. Ĕмĕрĕпех ырлăх курăр, – терĕ çывăхран хытă калаçнине çеç илтекен Феодосия Димитриевна парнешĕн тав туса.*

*Районта паян пĕччен пурăнакан 120 асаттепе асаннене 116 социаллă ĕçчен пăхать. Çак ĕç тивĕçлĕ шайри вырăнсене çитсен курăнать.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса укçан çакăн чухлĕ тӳлеççĕ

| Регион çăмăллăхĕсемпе усă куракансене | Социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă уйăхсерен тӳлеççĕ (ЕДВ) |
|---|---|
| Ĕç ветеранĕсене | 710 тенкĕ (тата 50 процент телефоншăн абонент тӳлевĕ) |
| Вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕсене | 700 тенкĕ |
| Реабилитаци тунă çынсене | 1775 тенкĕ (тата телефон тӳлевсĕр вырнаçтарса параççĕ) |
| Политика репрессийĕсене пула шар курнисем тесе йышăннисене | 1530 тенкĕ |
| Донорсене | 680,20 тенкĕ (çулталăкне 8162,40 тенкĕ) |
| Педагогика, медицина тата социаллă ĕçченсене, провизорсемпе фармацевтсене, патшалăх ветеринари службин тата культура специалисчĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме | 623,20 тенкĕ |

**Социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă пособисем тата ĕç укçи, вĕрентӳ пайĕ урлă компенсаци тӳлесси**

| | |
|---|---|
| Ĕçсĕр шутланакан хĕрарăмсене çие юлнăшăн тата ача çуратнăшăн тӳлекен пособи | 325,50 тенкĕ |
| Кая юлмасăр учета тăнă çие юлнă хĕрарăмсене пĕр хут паракан пособи | 359,70 тенкĕ |
| Ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособи | 9989,86 тенкĕ |
| Ачана пăхса пурăннăшăн ача çулталăк çурă тултариччен уйăхсерен тӳлесе тăракан пособин чи пĕчĕк виçи | 1873,10 тенкĕ (1-мĕш ачана пăхса пурăннăшăн)<br>3746,20 тенкĕ (2-мĕш тата хыççăнхи ачасене пăхса пурăннăшăн<br>7492,39 тенкĕ (пособин чи пысăк виçи) |
| Ачасемшĕн уйăхсерен паракан пособин база шайĕ (пособи виçи мĕн чухлĕ пуласси çемьен кашни членĕ пуçне тивекен тупăшран, унăн категорийĕнчен, миçе ача тата вĕсем миçе çулта пулнинчен килет | 124 тенкĕ (çемьере 1 ача пулсан)<br>155 тенкĕ (1 ача пуçне тата çемьере 2 ача пулсан)<br>174 тенкĕ (1 ача пуçне тата çемьере 2 е ытларах ача пулсан) |
| 2 çултан тытăнса 3 çулчченхи ачасене кирлĕ пек апатланма уйăхсерен паракан компенсаци | 70 тенкĕ |
| Çие юлнă тата ача çуратнă амăшĕсене кирлĕ пек апатланма уйăхсерен паракан компенсаци | 100 тенкĕ |
| Призывпа çар службинче тăракан çыннăн çие юлнă мăшăрне пĕр хут паракан пособи | 15820 тенкĕ |
| Призывпа çар службинче тăракан çыннăн ачине пăхса пурăнма уйăхсерен паракан пособи | 6780 тенкĕ |
| Опекăра е йышăннă çемьере пурăнакан ачашăн уйăхсерен паракан пособи | 4600 тенкĕ – 2 çулчченхи ачашăн<br>4785 тенкĕ – 2–7 çулсенчи ачашăн<br>5255 тенкĕ – 7–18 çулсенчи ачашăн |
| Ачана усрава йышăннă çемье членĕсенчен пĕрне тӳлекен ĕç укçи виçи – иккĕшне те тӳленĕ чухне | 3295 тенкĕ – 1–2 тăлăх ачашăн<br>4680 тенкĕ – 3 е ытларах тăлăх ачашăн<br>4680 тенкĕ – 6 е ытларах тăлăх ачашăн |
| Ачасене шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче тытса усранăшăн ашшĕ-амăшĕн тӳлевĕшĕн компенсаци | 20 процент – 1-мĕш ачашăн<br>50 процент – 2-мĕш ачашăн<br>70 процент – 3-мĕш тата ытти ачасемшĕн |

| Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене | Пенси фончĕ урлă уйăхсерен тӳлессин виçи (ЕДВ) | | Социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлессин виçи (ЕДВ) |
|---|---|---|---|
| | Соцпакета сыхласа хăварсан | Соцпакета сыхласа хăвармасан | |
| **«Ветерансем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн** | | | |
| Вăрçă инваличĕсене | 2447 тенкĕ | 3088 тенкĕ | 605 тенкĕ |
| Инвалида тухнă вăрçă участникĕсене | 2447 тенкĕ | 3088 тенкĕ | 605 тенкĕ |
| Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене | 1675 тенкĕ | 2316 тенкĕ | 360 тенкĕ |
| «Ленинград блокадинче пулнă çынна» знак илнисене | 936 тенкĕ | 1503 тенкĕ | 360 тенкĕ |
| Тĕрлĕрен çапăçусене хутшăннă ветерансене | 1058 тенкĕ | 1699 тенкĕ | 175 тенкĕ |
| Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсемпе участникĕсен, çапăçусене хутшăннисен çемйисен членĕсене | 286 тенкĕ | 927 тенкĕ | 300 тенкĕ |
| **«Раççей Федерацийĕнче инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн** | | | |
| 3-мĕш степень инвалидсене | 1521 тенкĕ | 2162 тенкĕ | 300 тенкĕ |
| 2-мĕш степень инвалидсене | 903 тенкĕ | 1544 тенкĕ | 300 тенкĕ |
| 1-мĕш степень инвалидсене | 595 тенкĕ | 1236 тенкĕ | 300 тенкĕ |
| Степень çук инвалидсене | 131 тенкĕ | 772 тенкĕ | 300 тенкĕ |
| Инвалид ача пур çемьесене | 903 тенкĕ | 1544 тенкĕ | 905 тенкĕ |
| **Раççей Федерацийĕн «Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула радиаци илнĕ çынсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн** | | | |
| Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула пайăрка чирĕпе е ытти чирпе чирленисене | 595 тенкĕ | 1236 тенкĕ | 360 тенкĕ |
| Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула инвалида тухнисене | 903 тенкĕ | 1544 тенкĕ | 360 тенкĕ |
| Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăн пулăмĕсене 1986–1987 çулсенче пĕтерме хутшăннисене | 903 тенкĕ | 1544 тенкĕ | 360 тенкĕ |
| Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăн пулăмĕсене 1988–1990 çулсенче пĕтерме хутшăннисене | 595 тенкĕ | 1236 тенкĕ | – |
| Уйрăмах хăрушлăхлă подразделенисен гражданĕсене | 903 тенкĕ | 1544 тенкĕ | 360 тенкĕ |
| Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăн пулăмĕсене пĕтерме хутшăннă вилнĕ инвалидсен мăшăрĕсене тата çемйисен членĕсене | – | – | 360 тенкĕ |

# Диплом илме пултартăмăр

Нумай пулмасть Шупашкарта республика шайĕнче Раççейри куç курманнисен обществин халăх пултарулăх фестивалĕн 2-мĕш тапхăрĕ иртрĕ. Малтан вăл вырăнти организацисенче пулнă. Кунта вара республикăри 14 пултарулăх ушкăнĕ «Южный» Культура çурчĕн сцени çине пĕрин хыççăн тепри тухрĕ. Сумлă жюри членĕсене пултаруллă нумай «артистсем» хушшинче тĕрлĕрен номинацисенче палăрнисене суйласа илме те çăмăл пулмарĕ.

Пирĕн организаци коллективĕ, пултарулăх ертӳçи 1-мĕш ушкăн инваличĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В.М. Александров ертсе пынипе куракансене 8 номер кăтартрĕ. Хора тата арçынсен ушкăнне жюри пысăк хак пачĕ – 2-мĕш степеньлĕ диплома тивĕçрĕмĕр. Малти вырăна вара Куславккасем йышăнчĕç. Общество членĕсем хушшинче В.Д. Михайлов сăвăçа, Ю.А. Сорокин юрăçа палăртрĕç. А.Д. Михайлова вара концерт программине ертсе пыракансем хушшинче 2-мĕш вырăн йышăнчĕ. Шупашкарти «Южный» Культура çуртĕнче нумайччен юрăкĕвĕ янăрарĕ, общество членĕсем те пĕр-пĕрне ăшшăн саламласа сăмахларĕç.

Умра халĕ тата ответлă тапхăр. Ятарлă положенипе килĕшӳллĕн мала тухнă коллективсен кĕркунне Хусанта Атăл тăрăхĕнчи регионта республика чысне хӳтĕлемелле пулать. Унта та хамăра япăх енчен кăтартмăпăр тесе шутлатпăр.

**В. ПАГЕЕВ,**
**1-мĕш ушкăн инваличĕ, вырăнти организацин бюро членĕ.**

# Хăйсен тимлĕхне пирĕнпе пайлаççĕ

Каршлăхри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен интернат çуртĕнче пултаруллă та хастар ĕçченсем тăрăшаççĕ. Вĕсем кирек хăçан та кунта хӳтлĕх тупнисене пулăшма тăрăшаççĕ.Сывлăхĕсем хавшаккисем, ĕçлеме пултарайманнисем, çемйисемсĕр е тăванĕсемсĕр юлнисем интернат çуртĕнче çук мар. Вĕсемшĕн ăшă сăмах та, кулленхи тимлĕх те çук мар вĕсен. Тепĕр чухне кунта ĕçлекенсем хăйсен тăван ашшĕ-амăшне пăхса пурăнаççĕ тейĕн.

Кунта ырă кăмăлпа ĕçлекенсене ятранах асăнса хăварас килет. Чи малтанах вара тав сăмахĕсене кунта вăй хуракан Любовь Александровна Петрова, Нина Сергеевна Сорокина, Татьяна Леонидовна Звонкова, Светлана Анатольевна Квасова т. ыт. те тивĕçлĕ.

Çак интернатра культорг пулса В.А. Крючкова ĕçлет. Вăл кунта татса паракан пĕр ыйтуран та айккинче тăрса юлмасть. Тăванĕсем патне çыру çырмалла пулсан çырусем те çырса парать, мĕн илтнине пĕтĕмпех илсе килсе парать. Уявсенче пирĕн валли тĕрлĕрен мероприятисем, концертсем хатĕрлет.

Кунпа пĕрлех пирĕн интернат çурчĕн директорне Г.Г. Мерлована тав сăмахĕ калас килет. Вăл хăйĕн ăшă кăмăлĕпе, çепĕç сассипе пирĕн хурлăхсене те, чирсене те сирсе ярать. Ытларахчĕ çавăн пек ăшă кăмăллă çынсем çут тĕнчере.

Тавтапуç сире пурне те пире пăхнишĕн, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, çак уяв ячĕпе саламлатпăр.

**Каршлăхри интернат çуртĕнчи ветерансем.**

**Тавралăх тирпей-илемĕшĕн**

# Масар çинче йĕрке пулĕ

Йĕпе-сапа вăхăтĕнче, ялсенче йĕркеллĕ çулсем пулман пирки, тепĕр чухне автотранспортпа тухса çӳреме май çук. Ку вара ял хуçалăхне аталантарассипе те, çынсене васкавлă медицина пулăшăвĕ парассипе те çыхăннă. Ытти проблемăсем те сахал мар.

Акă Муркаш ял тăрăхĕнчи Çĕньял Муркаш çăви çине унччен çынсем гидротехника сооруженийĕ урлă çӳренĕ. Темиçе çул каялла çурхи шыв-шур ăна ватса пĕтернĕ. Çавна май ял тăрăхĕн пуçарулăхĕпе масар патне çĕнĕ çул хывассипе ĕçлеме тытăннă. Çул çине хытарма вак чул Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчен турттарнă. Сахал мар – 500 тоннăна яхăн. Ăна тӳлевсĕр илсе килме калаçса татăлма май килнĕ. Çул-йĕр тăкакĕсене ял тăрăхĕ саплаштарнă. Çул тăвассипе ĕçсене вара «Волгодорстрой» пĕрлешӳ пурнăçланă. 1 километра яхăн. Масар территорине тирпей-илем кĕртессипе те ĕçлемен мар, унта çӳп-çап пухмалли 2 ещĕк вырнаçтарнă. Халĕ те шанса панă çынсем территорие тирпейлессипе ĕçлеççĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин каласа панă тăрăх, ытларах çул тăвас ĕçсене ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă ĕççĕррисене явăçтарма тăрăшнă. Вĕсемшĕн те усăллă, ял тăрăхĕшĕн те япăх мар.





**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Çĕньял Муркаш çăви çĕнĕ çул; Н. Павлов тата Н. Никитин çăва çинче тирпей-илем кĕртеççĕ.**

# Çимĕк уявĕ

Мăн кун хыççăн 7 эрне иртсен чăвашсем Çимĕк уявне паллă тăваççĕ. Шăмат кун çынсем вилнĕ тăванĕсене аса илеççĕ. Вăл христиансен Троица уявĕпе пĕр килет.

Çимĕк умĕн хĕрарăмсем вăрмана кайнă, сиплĕ курăксемпе йывăççен тураттисене илсе тавраннă, вĕсене çуртсен кантăкĕсем, хапхасемпе алăксем тавра тирсе тухнă. Ытларах чухне вĕсем пилеш тураттисем пулнă. Мĕншĕн тесен авалтанпах пилеш усал сывлăшран сыхлать тесе шутланă. Ку йăла-йĕрке хальхи вăхăтра та тĕл пулать. Троица чухне ялсенче чӳречесене пилеш турачĕсемпе «илемлетнине» курма пулать.

Троица умĕн çынсем мунчара тĕрлĕ курăксенчен хатĕрленĕ шывпа çăвăнаççĕ, тĕрлĕ йывăççен тураттисемпе çапăнаççĕ. Асăну кунĕнче кукăльсем, икерчĕсем тата ытти çимĕççем хатĕрлеççĕ. Вилнисене килте асăннă хыççăн çăва çине каяççĕ, хăйсемпе илсе пынă çимĕççемпе вилнисене «сăйлаççĕ».